26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 3 ТУНТИКУН 2(6497) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем, пехота вирлĕн атака тунипе тата танк соединенийĕсем çавăрса илмелли маневра пĕлсе тунипе, декабрĕн 31-мĕшĕнче Украинăри область центрне — Житомир хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ.

Житомир хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче ГРЕЧКО генерал-полковникăн, ЛЕСЕЛИДЗЕ генерал-полковникăн, ЧЕРНЯХОВСКИЙ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата РЫБАЛКО генерал-полковникăн танкисчĕсем чапа тухнă.

Çапăçусенче уйрăмах çаксем чапа тухнă:

ЛАЩЕНКО полковникăн 322-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ИГНАЧЕВ полковникăн 336-мĕш стрелковăй дивизийĕ, БУШЕВ генерал-майорăн 129-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, ВОРОЖИЩЕВ полковникăн 395-мĕш Тамански стрелковăй дивизийĕ, БОГДАНОВ полковникăн 99-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ВЕХИН генерал-майорăн 350-мĕш стрелковăй дивизийĕ, МУЗЫКИН подполковникăн 304-мĕш стрелковăй дивизийĕ, танк çарĕсен генерал-майорĕн ИВАНОВАН 7-мĕш Гвардейски Киевски танковăй корпусĕ, танк çарĕсен генерал-майорĕн МАЛЫГИНАН 9-мĕш механизированнăй корпусĕ, МИХАЙЛОВ полковникăн 22-мĕш Гвардейски Фастовски мото-стрелковăй бригади, НОВОХАТЬКО подполковникăн 51-мĕш Гвардейски Фастовски танковăй бригади, АРХИПОВ полковникăн 53-мĕш Гвардейски Фастовски танковăй бригади, ЯКУБОВСКИЙ полковникăн 91-мĕш Фастовски уйрăм танковăй бригади, ПЛЕСКО полковникăн 52-мĕш Гвардейски Фастовски танковăй бригади, ДОРОПЕЙ полковникăн 93-мĕш уйрăм танковăй бригади, ОХРИМЕНКО подполковникăн 21-мĕш Гвардейски танковăй бригади, ПЕТРОВИЧ майорăн 14-мĕш Гвардейски танковăй бригади, МЕЛЬНИКОВ полковникăн 47-мĕш Гвардейски уйрăм танковăй полкĕ, ШИШАКОВ майорăн 59-мĕш Киевски уйрăм танковăй полкĕ, БАСОВ подполковникăн 1.893-мĕш Фастовски хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ, КУЛИКОВ подполковникăн 1.831-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ, КАРТАШОВ майорăн 1.642-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, НАТОПТАННЫЙ майорăн 1.644-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, БОГАТЫРЕВ подполковникăн 839-мĕш гаубицăпа артиллери полкĕ, БОСЛАВСКИЙ подполковникăн 525-мĕш минометнăй полкĕ, артиллери генерал-майорĕн САНЬКОН 3-мĕш артиллери дивизийĕ, НЕМОВ полковникăн 12-мĕш Киевски минометнăй бригади тата артиллери генерал-майорĕн ВОЛКИНШТЕЙНĂН 17-мĕш Киевски-Житомирски артиллери дивизийĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас тесе, Житомир хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăсcене «ЖИТОМИРСКИ» ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăсcене çапла чĕнмелле тăвас:

322-мĕш Житомирски стрелковăй дивизи,
336-мĕш Житомирски стрелковăй дивизи,
129-мĕш Гвардейски Житомирски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизи,
99-мĕш Житомирски стрелковăй дивизи,
350-мĕш Житомирски стрелковăй дивизи,
304-мĕш Житомирски стрелковăй дивизи,
93-мĕш Житомирски уйрăм танковăй бригада,
21-мĕш Гвардейски Житомирски танковăй бригада,
14-мĕш Гвардейски Житомирски танковăй бригада,
47-мĕш Гвардейски Житомирски уйрăм танковăй полк,
1.831-мĕш Житомирски хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ,
1.642-мĕш Житомирски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
1.644-мĕш Житомирски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
839-мĕш Житомирски гаубицăпа артиллери полкĕ,
525-мĕш Житомирски минометнăй полк,
3-мĕш Житомирски артиллери дивизийĕ,
9-мĕш Житомирски механизированнăй корпус.

395-мĕш Тамански стрелковăй дивизине, 7-мĕш Гвардейски Киевски танковăй корпуса, 22-мĕш Гвардейски Фастовски мото-стрелковăй бригадăна, 51-мĕш Гвардейски Фастовски танковăй бригадăна, 53-мĕш Гвардейски Фастовски танковăй бригадăна, 91-мĕш Фастовски уйрăм танковăй бригадăна, 52-мĕш Гвардейски Фастовски бригадăна, 59-мĕш Киевски уйрăм танковăй полка, 1.893-мĕш Фастовски хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкне, 12-мĕш Киевски минометнăй бригадăна тата 17-мĕш Киевски-Житомирски артиллери дивизине, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче темиçе хутчен те чапа тухнăскерсене, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 1-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ ЖИТОМИР хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене икçĕр çирĕм тăватă тупăран çирĕм хут пĕр харăс персе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ЖИТОМИР хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН

1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕ.

Белоруссин ССР-ĕн Верховный Совечĕн Президиумне

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Белоруссен Советлă Социализмлă Республики 25 çул тултарнă кун Белоруссири рабочисене, колхозниксене, интеллигенцие тата мĕнпур ĕççыннисене хĕрӳллĕ салам ярать.

Белоруссири ĕççыннисем, нимĕç захватчикĕсемпе тата белополяксемпе хаярăн çапăçса, хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне çĕнтерсе илсен, совет влаçĕ вăхăтĕнче, 25 çул хушшинче, Совет Союзĕнчи халăхсем тăванла пулăшнипе, хуçалăхпа культура ĕçĕсенче тата хăйсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕç. Белоруссен Советлă Социализмлă Республики ытти совет республикисем хушшинче тивĕçлипе малта пыракан орденлă республика вырăнне йышăнчĕ. Совет влаçĕ вăхăтĕнче белоруссен çĕрĕсем белоруссен пĕрлĕхлĕ государствине пĕрлешрĕç.

Гитлерăн йыткĕтĕвĕсем, Совет Союзĕнчи халăхсене чуралантарма шут тытса, белорусс халăхĕн мирлĕ ĕçне татрĕç, белоруссен çĕрĕсене юнпа шăварăççĕ, белоруссене пинĕ-пинĕпе нимĕç чуралăхне хăваласа каяççĕ, белорусс халăхне калама çук тискеррĕн тыткалаççĕ.

Анчах та белорусс халăхĕн асапĕсем ăна хăйĕн курайман тăшманĕпе çапăçма пăрахтараймарĕç. Белорусс халăхĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле тăшмана хирĕç вăйлăн кĕрешет. Белорусс халăхĕн ывăлĕсем Хĕрлĕ Çарта тата партизансен отрячĕсенче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ, вĕсене хăйсен аппăшĕсем, ачисем, амăшĕсем асапĕсемшĕн тавăраççĕ.

Паттăр Хĕрлĕ Çар, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, белоруссен çĕрне ирсĕр тăшмантан пĕтĕмпех тасатас вăхăт, белорусс ĕççыннийĕсене нимĕçсен фашистла чуралăхĕнчен хăтарас вăхăт инçе юлмарĕ ĕнтĕ.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çакна çирĕп шанса тăрать: белорусс халăхĕ, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçласа пыраканскер, фашистла ирсĕрсене хăваласа янă хыççăн, çине тăрса ĕçлесе, Белоруссин тăшман аркатнă халăх хуçалăхне кĕске вăхăтрах ура çине тăратĕ.

Сывă пултăр Белоруссен Советлă Социализмлă Республики!

Сывă пулчăр белорусс халăхĕн паттăр ывăлĕсем, Тăван çĕршыва ирĕке кăларассишĕн нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекенскерсем!

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ.

Донбасс облаçĕнчи ачасене пулăшма

КУКЕÇ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар фронтра нихăçан пулман паттăрлăхпа геройлăх кăтартса çапăçать. Совет ĕççыннисем Украинăпа Белоруссири темиçе çĕр яла ирĕке кăларни çинчен пĕлеççĕ.

Паттăр Хĕрлĕ Çар тунă ӳсĕмсемпе хавасланса эпир, Альгешри тулли мар вăтам шкулта вĕренекен пионерсемпе комсомолецсем, Донбасс облаçĕнчи ачасене пулăшма укçа пухма тытăнтămăр. Пĕр кун хушшинче кăна 1.500 тенкĕ пухрăмăр.

Ку ĕçре уйрăмăнах В. Плотников, Л. Залетило, Григорьев комсомолецсем активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсем 50 — 35-шер тенкĕ пачĕç. Укçа пухас ĕç малалла пырат.

В. ДАНИЛОВА, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ.

Сталинградра трамвай çӳреме пуçланă

Декабрĕн 26-мĕшĕнче Сталинградра хулари трамвайăн пĕр линийĕ ĕçлеме пуçланă. Çав линин тăршшĕ 7 километр. Вăл хула варринчен пуçласа «Красный Октябрь» завода çитиччен каять. (ТАСС)

ВЦСПС-па, ССР Союзĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕпе Центросоюзра

ВЦСПС-па ССР Союзĕн суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тата СССР-па РСФСР Центросоюзĕсем государство валли тырăпа çĕрулми сутăн илес плана лайăх тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăван 1943 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕчченхи итсĕгĕсене пăхса тухнă.

Государство валли тырăпа çĕрулми сутăн илес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн Чăвашпотребсоюза (председателĕ Терентьев, профсоюз обкомĕн председателĕ Григорьева) — пĕрремĕш преми, Октябрьски район центрĕнчи сельпона—виççĕмĕш преми тата çавăн пекех торгплодоовощь системине кĕрекен Вăрмар заготконторине—виççĕмĕш преми паралла тунă.

Фронтовиксем валли—ăшă япаласем

КУСЛАВККА. Районри ĕççыннисем фронтовиксем валли 1.030 мăшăр çăм носки, 5.049 мăшăр алшиш, 258 мăшăр алса (тирĕн çĕленĕ алсасем), 345 çĕлĕк, 5 фуфайка, ваткăран çĕленĕ 7 шăлавар, 84 кĕрĕк-пиншак, 125 мăшăр çăматă тата ытти ăшă япаласем те чылай пухса пана.

Е. Ефимов.

Пурте йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне хутшăнар

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Комсомолăн «Броневик» колхозри пуçламĕш организацийĕ колхоз çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хастарлăн хатĕрленет. ВЛКСМ организацин секретарĕ С. Петрова юлташ ку ĕçе лайăх йĕркелесе пырать. Пĕтĕмпе 5 команда организациленĕ. Вĕсем йĕлтĕрпе лайăх çӳреме вĕренес тесе час-часах тренировкăсем ирттерĕççĕ. А. Спиридонов, П. Комаров тата М. Волков комсомолецсем тарăн çырмасемпе кĕртсем тăрăх çӳреме тата чупма хăнăхса çитрĕç те ĕнтĕ.

Ассакасси тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хутшăнма 4 команда тунă.

Б. ШОРНИКОВ.

Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар 1944 çулта фашистла захватчиксене пĕтермеллех пырса çапĕ, Совет Союзĕн территорине çав ирсĕрсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерĕ

ÇĔНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ ИЛЧĔÇ

ÇĔМĔРЛЕ. «Большевик» заводра М. И. Калинин юлташăн çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмахне тата Совет Союзĕн çĕнĕ гимнне итленĕ хыççăн рабочисемпе работницăсем, 1944 çулта иртнĕ çулхинчен тухăçлăрах ĕçлеме пулса, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Завод коллективĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 10 процентран кая мар йӳнетме, ĕç тухăçлăхне 15 процента çити ӳстерме, 1944 çулхи март уйăхĕ тĕлне çултталăкри планăн çуррине тултарма пулчĕ. Çав вăхăт хушшинче рационализацилле сĕнӳсем 150 сĕнӳ памалла, рабочисене вĕрентме техминимум кружокне йĕркелемелле, завод коллективĕн 60 процентне стахановецсемпе ударниксен ретне тăратассишĕн кĕрешмелле.

Халĕ кашни рабочипе работница илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн ăмăртăва тухрĕç.

К. ДМИТРИЕВ.

Çултталăкри плана 120 процент пурнăçланă

Шупашкарти сăра завочĕ (директорĕ П. Быков юлташ) 1943 çулхи производство планне декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 120 процент пурнăçланă, çапла вара вăл планран ирттерсе 43 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

(Хамăр информ.).

Столицăри ĕççыннисем çĕнĕ çулта тата лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче М. И. Калинин юлташăн çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмахне митингсемпе пухусенче сӳтсе-явaççĕ.

Чăлха фабрикин коллективĕ (директорĕ Богуславская юлташ) М. И. Калинин юлташ сăмахне чĕререн хапăл туса кĕтсе илчĕ, хăйĕн ĕçĕнче кулленех пысăк çитĕнӳсем тума пулчĕ. Фабрикăри паллă стахановкăсем Крылова, Матюшко, Каменецкая юлташсем ĕç нормине кашни уйăхрах 200 процентран кая мар тултарса пыма пулчĕç.

Çавăн пекех «Вышивка» артель коллективĕ те 1944 çулта ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерме пулса, хăй çине пысăк обязательствăсем илчĕ.

— 1944 çул ылханлă тăшмана тĕппипех аркатса тăкмалли çул пулса тăрĕ. Эпир çĕнтерӳ вăхăтне çывхартассишĕн вăхăта шута илмесĕр ĕçлĕпĕр, ĕç тухăçлăхне куллен кун ӳстерсе пырăпăр,—теççĕ столицăри ĕççыннисем.

М. И. Калинин юлташ сăмахне итленĕ хыççăн

ВАРНАР, январĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ 1944-мĕш çĕнĕ çул çитнĕ ятпа каланă сăмахне тимлĕн итлерĕç. Колхозсенче М. И. Калинин юлташ сăмахне сӳтсе-явас майпа митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. М. И. Калинин юлташ сăмахне колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса пама ВКП(б) райкомĕ районри партипе совет активне колхозсене ячĕ. Çавăн пекех ку ĕçе вăрманта ĕçлекенсем хушшинче те аван организациленĕ. Районри колхозниксемпе колхозницăсем, Михаил Иванович Калининăн чĕрене саваντаракан сăмахĕсене итленĕ хыççăн, 1944 çулта тăван çĕршывпа фронта тăтах та ытларах пулăшмашкăн пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлеме пулаççĕ.

Вăрманта ĕçлекенсем вутă хатĕрлевĕн 1944 çулхи пĕрремĕш кварталти планне январь уйăхĕнче тултарма пулчĕç. Район чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана 1943 çулта 110 процент пурнăçланă. Ленин, Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсем вутă хатĕрлемелли 1944 çулхи плана 40 процента яхăн тултарнă. Çавăн пекех «Победа» колхоз та ку ĕçре малта пырать.

— 1944 çул çĕнтерӳ çулĕ пуласси не эпир шанса тăратпăр. Фронтпа çĕршывшăн нимĕн те шеллемесĕр ĕçлĕпĕр, çĕршыв умĕнчи таса тивĕçе чыслăн пурнăçлăпăр,—теççĕ районри ĕççыннисем.

В. БАГРОВ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 1-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, 28 ял тытса илнĕ, çав шутра—ОСИНОВКА, ЗАМОШЬЕ, НИВЬЕ, ЗАВОРУИ, УСТЬ-ДОЛЫССЫ ятлă ялсем.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, Житомир облаçĕнчи БАРАШИ ятлă район центрне, Винница облаçĕнчи САМГОРОДОК ятлă район центрне, Киев облаçĕнчи ВОЛОДАРКА, ГРЕБЕНКИ ятлă район центрĕсене тата БЕЛОКОРОВИЧИ, ПОГРЕБИЩЕ ятлă чугун çул узелĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăнса илнĕ, çав шутра — БЕЛОКОРОВИЧИ, МЯКОЛОВИЧИ, ОСЕЛКА, ГОРБОВО, АПОЛОНОВКА, БОБРИЦА, КИЯНКА, ЯНУШЕВКА, СОКОЛОВ, КУРНОЕ, СТАРЫЙ МАЙДАН, СТРИБЕЖ, НОВЫЙ ЗАВОД, ПЕРЛОВКА, ВЕЛИКИЙ ШУМСК, ВЕЛИКАЯ ТАТАРИНОВКА, СТАРЫЙ СОЛОТВИН, ГАЛЬЧИНЕЦ, ИВАНКОВЦЫ, ГЛУХОВЦЫ, КУМАНОВКА, ГОРДЫШЕВКА, ЮЗЕФОВКА, ШИРМОВКА, СТАНИЛОВКА, БЕЛАШКИ, ПАВЛОВКА, ДЗЮНЬКОВ, КАПУСТИНЦЫ, ВОРОБЬЕВКА, АНТОНОВ, БЕРЕЗНО, ЯБЛОНОВКА ятлă ялсене тата КРЕМНО, ЯБЛОНЕЦ, БОГУНСКИЙ, ДУБОВЕЦКИЙ, КУРНОЕ, ГЛУХОВЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 78 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем, тăшмана татăклăн пырса çапса, ăна вăйлă çирĕплетнĕ пунктсенчен хĕссе кăларнă, хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă. Гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет чăсĕсем, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, темиçе ял тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли ытла вырта юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Малалла вирлĕн куçса пырса, пĕр чăсăн танкисчĕсем тăшманăн каялла чакакан колоннине вăйлăн пыра-пыра çапнă. Пирĕн боецсем нимĕç пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен дивизи штабне аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, çав шутра—юсавлă 4 танк, темиçе артиллери батарейи, 100 автомашина ытла, 350 лав тата 600 лаша. Танкистсемпе пехотинецсем пĕрле çапăçса, Житомир облаçĕнчи Бараши ятлă район центрне тытса илнĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, пĕр соединени чăсĕсем темиçе ял тытса илнĕ, çав шутра—Винница облаçĕнчи Самгородок ятлă район центрне. Самгородок хулишĕн пынă çапăçура 1000 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсенчен 22 тупă, 89 пулемет, 15 миномет, 65 автомашина тата 6 радиостанци тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Тепĕр соединени чăсĕсем, ăнăçлăн малалла куçса пырса, нимĕçсене Киев облаçĕнчи Гребенки тата Володарка ятлă район центрĕсенчен хĕссе кăларнă. Çапăçусенче тăшман питĕ пысăк çухатусем тӳсет. Нимĕçсен çĕмĕрсе тăкнă чăсĕсемпе соединенийĕсем пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне хăйсен артиллерине, автомашинисене, боеприпасĕсене тата тĕрлĕ çар материалĕсене пăраха-пăраха хăвараççĕ. Пирĕннисем апатçимĕç, хĕçпăшал тата çар пурлăхĕ хунă пысăк складсене тытса илнĕ.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрядĕнчи виçĕ подрывник чугун çулăн пĕр паха участокĕнче нимĕçсен çар поезчĕсене ӳпĕнтерсе ярас ĕçе организациленĕ. Декабрĕн 8-мĕшĕнче, тул çуталса килнĕ чух, совет патриочĕсем тăшманăн артиллерипе прожекторсем турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Декабрĕн 10-мĕшĕнче партизансем автомашинăсем турттарса пыракан поезда ӳпĕнтерсе янă. Декабрĕн 11-мĕшĕнче, партизансем хурса хăварнă минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен танксем турттарса пыракан эшелонĕ ӳпĕнсе кайнă. Халăх юнĕшĕн тавăракан çак виçĕ партизан пĕр эрне хушшинче тăшманăн фронт патнелле каякан виçĕ эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушенисене пула 6 паровоз тата 55 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ. Чугун çулăн çав участокĕнче вара поездсем темиçе кун хушши çӳреймен.

* * *

Нимĕçсен 7-мĕш танковăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă лейтенант Генрих В. çапла каласа панă: «Нимĕç çарĕсем Житомира тытса илсен, эпир кăшт хаваслантăмăр. Днепр шывне каялла тытса илсе, Украинăн пĕр пайне те пулин хамăр алăра тытса тăма пулĕ, тесе кăшт та пулин шанма май пулчĕ. Житомир хулине каялла тытса илсен, Гитлер приказ кăларчĕ, унта вăл малалла наступлени туса пыма тата Киев хулине кирек мĕн пулсан та тытса илме хушнăччĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртме танковăй тата пехотнăй дивизисенчен тăракан вăйлă группировкăна хушнăччĕ. Пире малалла куçса пыма питĕ хĕн пулчĕ, эпир калама çук пысăк çухатусем тӳсрĕмĕр. Ноябрь уйăхĕ пĕтнĕ тĕле пирĕн дивизири çынсенчен 70 процентĕнчен кая мар пĕтрĕ, танксем пурте тенĕ пекех пĕтрĕç. Хаяр çапăçусем мĕнпур вăя çăтса тăчĕç. Хушса паракан вăйсем пирĕн çухатусене саплаймасчĕç. Халран кайнă чăсем вара малалла атакăсем тума пултараймарĕç. Хĕлле Киева илме наступлени туни пирĕн юлашки шанчăк пулса тăчĕ. Вăл намăссăн путланса ларчĕ. Вырăссем вирлĕн контрнаступлени туни нимĕç командованийĕн пур планĕсене те арпаштарса ячĕ. Халь салтаксем çеç мар, офицерсем те çапла шутлаççĕ: 1943 çулта Хĕвелтухăç фронтĕнче пысăк çухатусем тӳснĕ хыççăн нимĕç çарĕ ĕнтĕ нихăçан та вăй илсе çитереймĕ, теççĕ».

* * *

Киев облаçĕнчи Пшеничники ялĕнчи çынсем Т. П. Петриченко тата А. Т. Петриченко нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çапла каласа панă: «Нимĕç ирсĕрĕсем пирĕн ялти халăха икĕ çул хушши ытла мăшкăлласа пурăнчĕç. Пирĕн яла йышăннăранпа фашистсен пуçкасаканĕсем ялти 195 çынна персе вĕлерчĕç. Нимĕçсем хăйсем чакас умĕн уйрăмах иртĕнсе кайрĕç. Вĕсем мĕнпур çынсене, миçе çултине пăхмасăр, хăйсен килĕсенчен хăваласа кăларчĕç те вĕсене хуралласа пырса тыла хăваласа кайрĕç. Утма пултарайман стариксемпе чирлисене гитлеровецсем пере-пере вĕлерчĕç. Вĕсем 80 çулхи колхозника Гаврил Нестеренкона, 75 çулхи колхозницăна Анфиса Шевченкона тата ыттисене те вĕлерчĕç. Пĕр ялта пирĕн колонна чарăнчĕ. Темиçе кун хушши эпир тултах пурăнтăмăр. Унта пире нимĕçсем ним хăвармиччен çаратрĕç, унтан валеçекен лагере хăваласа кĕртрĕç. Гитлерла ирсĕрсем ашшĕ-амăшĕсене ачисенчен уйăрса ячĕç. Ĕçлеме пултаракан çынсене Германие каторгăна ăсатрĕç, ачасене лагерьтех хăварчĕç. Çав ачасене кайран мĕн туни паллă мар. Çул çинче эпир таргăмăр та хамăр яла, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăскере, таврăнтăмăр».

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНЕР

Кăçалхи вăйлă тырпулшăн

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Малти Питикассинчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз ялсоветĕнче малти вырăнта тăрать. Халĕ кунта хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ, вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех сортласа тасатса хунă. Вĕсене ăхма юрăхлă кондицие лартнă. 13 плуг юсанă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозра уйрăмах фронтовик И. Димитриев юлташăн бригади малта пырать. Ку бригада кĕске вăхăт хушшинче уя 396 лав тислĕк кăларчĕ. Плугсемпе сÿресене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитернĕ. Бригадăра 10 лаша. Вĕсем валли 12 пĕкĕ, 12 хăмăт, 10 ĕнерчĕк, çителĕклĕ таран урапа тата ытти хатĕрсем те юсаса хунă. Ку бригадăри колхозниксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

Халĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозра çĕре çемçетмелли удобренисем пухас тĕлĕшпе хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Ку ĕçе шкул ачисене те активлăн явăçтарнă. Паянхи куна 11 центнер кĕл, 29 центнер фекали, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă.

Колхоза унăн председателĕ Отечественнăй аслă вăрçă участникĕ И. Миронов юлташ лайăх ертсе пырать.

В. ВЕСЕЛОВ.

17 колхоз хатĕр

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Районри колхозсем çитес çуракине нихăçанхинчен тимлĕн хатĕрленеççĕ. Кашни колхозник хăй умне кăçал гектартан 100 пăтран кая мар тĕш тырă туса илес задача лартнă. Паянхи куна районри 53 колхозран 17-шĕ çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Ыттисенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕç пырать.

Г. КРЮЧКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сăмахпа çеç...

— Эпир вăрлăхсене сортласа пĕтертĕмĕр,—терĕ Кушарти Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Стригунов юлташ.

— Плугсене те юсанă-и?

— Юсанă. Пĕтĕмĕшпех, 8 плуг юсанă, вĕсем тимĕрçĕ лаççи умĕнчех лараççĕ,—ответлет председатель. Çав хушăра колхоз счетоводĕ Гордеев юлташ вăрттăнраххăн: йăл кулса илчĕ. Колхоз канцелярийĕнче ларакан ытти колхозниксем те пĕр-пĕрин çине ĕненмен пек пăхса илчĕç.

Колхоз вăрлăхсене çуррине те сортламан, плугсене иккĕшне кăна юсанă. Сÿресем пурте юр айĕнчех, жнейкăсем те тимĕрçĕ лаççи умĕнче юр ăшĕнчен кăшт кăна курăнса лараççĕ. Вĕсене хÿтĕрех вырăна кĕртсе лартма шутламан пулас. Сеялка та юсавсăр.

Пĕр-икĕ эрне каярах çеç колхозăн тимĕрçĕ пурччĕ. Анчах ăна чылай вăхăт ĕç памасăр тăчĕç. Çапах та тимĕрçе кашни уйăхра 15 пăт тырă парса тăчĕç.

Мĕн туса ирттереççĕ-ши вăхăта колхоз руководителĕсем?

С. ШАДИН.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, (хамăр корр.).

Вăкăрсене ĕçе вĕрентеççĕ

Вăрнар районĕнчи Мамалайри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра çуракине хатĕрленнĕ май, кастарнă вăкăрсене ялхуçалăх ĕçĕнче усă курма вĕрентеççĕ.

Паянхи кун тĕлне 4 вăкăра ĕçе кÿлме вĕрентнĕ те ĕнтĕ. Вăкăрсене ĕçе вĕрентес тĕлĕшпе Семенов юлташ аван ĕçлет.

Çак паха пуçаруна ытти колхозсенче те усă курмалла. Вăкăрсене кÿлсе çÿреме вĕрентни—ака-суха ĕçĕ валли туртăм вăйĕ хушса пани пулать.

А. БЕЛКИН.

Колхозсем валли массăллă квалификациллĕ кадрсем хатĕрлени

Çĕнĕ çулăн пуçламăшĕнче районсенчи колхоз шкулĕсенчен, курссемпе кружоксенчен бригадирсем, выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем, ветеринари фельдшерĕсем тата ялхуçалăхĕнчи ытти специалистсем вĕренсе тухаççĕ.

1943 çулта РСФСР-ти шкулсемпе кружоксенче кăна икĕ миллиона яхăн колхозник вĕреннĕ. Курссенчен конюхсем, дояркăсем, тимĕрçĕсем тата звеньевойсем пурĕ 700.000 çын вĕренсе тухнă. Массăллă квалификациллĕ кадрсем хатĕрлесси пуринчен ытла Мускав, Иваново, Горький облаçĕсенче ăнăçлăн пулса пырать. (ТАСС).

Тăван çĕршывăн аслă полководецĕсем

Александр Суворов

Суворов ячĕ пирĕншĕн кашнинĕшĕнех çывăх ят пулса тăрать, ăна кашни çынах пĕлет.

Российăн кĕрешÿ историйĕнче Суворов калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Аслă полководецăн тактики меслечĕсене пирĕн Хĕрлĕ Çар хăйĕн боевой ĕçĕнче никĕсе хывнă. вĕсем паянхи куна çитсе те кивелмен. Суворов хăй пурăннă вăхăтра хăйне пăхăнса тăракан вэйскăсене воспитани панă çеç мар, вăл малашлăхшăн та кĕрешÿ ялавĕ пулса юлнă.

Александр Васильевич Суворов 1730-мĕш çулта çуралнă. Çамрăк чухне вăл имшер пулнă, хăйĕн тантăшĕсем пуçаракан шавлă вăйăсенчен пăрăнма тăрăшнă. Унăн ашшĕ, çар службин йывăр условийĕсене пĕлсе тăнăскер, ывăлне граждăн службинче ямă шутланă. Анчах Суворов ÿссе çитĕне пуçласанах хăйне çар çынни пулас енĕпе хатĕрлеме пуçланă. Вăл пур халăхсен пур вăхăтсенчи полководецĕсен биографийĕсене вулаcа тухнă, вĕсем тунă походсене вĕренсе çитнĕ. Вара унăн ашшĕ хăйĕн ывăлĕ суйласа илнĕ çула ырланă.

Çар службине Суворов рядовой салтак пулса кайнă. Салтаксем хушшинче 9 çул пурăнни, вăл салтаксен казармăри пурнăçĕпе çыхăнса тăман пулин те, Суворовшăн калама çук паха пулнă. Сăнама юратакан Суворов салтаксен пурнăçне лайăх пĕлсе çитнĕ, вырăс воинĕн уçăмлă чунне лайăх ăнланнă, вĕсемпе туслашнă. Салтаксем Суворова, вăл обществăри хăйĕн вырăнĕ енĕпе вĕсенчен уйăрăлса тăнă пулин те, ăçта пырсан та яланах хăйсен пиччĕшĕ вырăнне шутланă.

Суворов хăй ĕмĕрĕн юлашки кунĕ таранччченех çар лагерĕнче хăнăхнă пек пурăннă: ытти салтаксем тăхăнакан тумтирех тăхăнса çÿренĕ, вĕсем çиекен апатах çинĕ. Нумай чухне вăл салтаксемпе пĕрле хурантан пăтă çинĕ, утă çинче çывăрнă, пир кĕпе е салтак пиншакĕ тăхăнса çÿренĕ. Çакăн пек уйрăмлăхсене пула ăна ытла та нумай çын пĕлнĕ. Салтаксем ăна çирĕп ĕненсе пăхăнса тăнă çеç мар, ăна тата калама çук хытă юратнă.

Çичĕ çула пынă Пруççи вăрçи (1756—1763) Суворов ирттернĕ çапăçусен чи малтанхи кампанийĕ пулнă. Унăн начальникĕсем пĕлтернĕ тăрăх, вăл паттăр кавалерист, вырăна час чухласа илекен, çапăçура хастарлă, хăрушлăх умĕнче чĕтресе тăман çын пулнă.

Суворов чи малтан Кÿнерсдорф патĕнчи паллă çапăçăва хутшăннă. Çав çапăçура вырăссем Пруççи королĕн пысăк вăйне пуçĕпех çапса çĕмĕрнĕ. 2-мĕш Фридрих вырăссен тыткăнне лексрен аран кăна хăтăлса юлнă.

Атакăлакан чăссен пуçĕнче пырса, вĕсене ертсе пыракан çамрăк та паттăр офицера часах асăрханă. Кун хыççăн ăна çар авангарчĕн командующийĕ вырăнне лартнă. Çав çар чăçне Суворов ăмăрткайăк кĕтĕвĕ пек туса хунă. Çарта ун çинчен «унăн отрячĕ утса мар, вĕçсе çÿрет», тенĕ.

Пĕррехинче драгунсен отрячĕ Суворовпа пĕрле çавăрса илнĕ пулнă. Нимĕçсем «парăнăр» тесе ультиматум янă.

— Эпĕ ку сăмаха ăнланаймастăп, —тенĕ Александр Васильевич.—Хăйĕн боецĕсене атакăна кĕртсе янă та ункăран татса тухнă, тыткăна лекнĕ нимĕçсене хăйпе пĕрле илсе кайнă, унтан ытти чăссемпе пĕрлешнĕ те нимĕçсене каялла хăваласа янă.

Пруссаксене çапса çĕмĕрсе, Берлина йĕри-тавра çавăрса илсессĕн, операцисенче уйрăмах палăрнă Суворова нимĕçсен столицине чи малтан кĕрсе кайма ирĕк панă.

Çичĕ çул пынă вăрçăра пысăк çитĕнÿсем тунăшăн ăна Суздальски полк командирĕ туса хунă. Çак полкăн пуçĕнче тăрса, Суворов çар педагогикин чаплă меслечĕсене шухăшласа кăларнă. Вăл салтаксене çĕрле инçе çула çÿрептернĕ, юханшыв урлă ишсе каçтарнă, тĕрлĕ чăрмавсене сиксе яма хăнăхтарнă.

Унăн чи паллă правили салтаксене мирлĕ вăхăтрах вăрçă условийĕсене

хăнăхтарасси пулнă. «Вĕренÿре йывăр пулсан—вăрçăра çăмăл пулать, вĕренÿре çăмăл пулсан—вăрçăра йывăр пулать», тенĕ Александр Васильевич.

Каярахпа, поляк конфедерачĕсемпе тата Дунай фронтĕнче çапăçнă хыççăн (1774 çулхи Козлуджи патĕнчи çĕнтерÿ), Суворов хăйĕн вĕренÿ меслечĕсем тĕрĕс пулнине курнă. Çапах та вăрçăра тунă çитĕнÿсем ун чухне Суворова малти рете кăларса тăратайман, 1774-мĕш çул хыççăн та ăна пахах мар командăн вырăнсене çеç лартнă.

1787—1791-мĕш çулсенчи Турци вăрçи кăна Суворов валли анлă çул уçса панă. Кинбурн, Фокшан, Рымник патĕнчи питĕ чаплă виçĕ çĕнтерÿ хыççăн çеç вăл, 60 çулти скер, хăй ĕмĕрĕнчи чи паллă полководец ятне илнĕ. Уйрăмах та 1789 çулта Рымник патĕнче тунă çĕнтерÿ питĕ чаплă пулнă. Вăл хăйĕн 24 пин çынлă çарĕпе противникăн 100 пин çынлă çарне çĕмĕрсе тăкнă. Вăл калама çук хăвăрт маневр туса илнине пула çĕнтернĕ: икĕ талăк хушшинче унăн çарĕ тăшман куçĕ умне курăнмасăр 75 çухрăм кайнă.

1794 çулта Суворова каллех пысăк çарăн пуçне лартнă. Польша кампанийĕ генилле полководеца татах та пысăкрах чапа кăларнă.

Акă ĕнтĕ тупăсен сасси лăпланнă. Александр Васильевич столицăран инçетри хулара — Тульчинăра—пĕр çарăн командующийĕ пулса, Суздальски полкра пуçланă ĕçе малалла туса пынă. Хăйĕн салтакĕсене ырмиканми вĕрентнĕ, маневрсем тума хăнăхтарнă. Çакăнта çуралнă унăн «Çĕнтермелли çинчен калакан аслă лăх» текен инструкцийĕ. Унăн тĕп шухăшĕсене 1918 çулта, Ленин хушнă тăрăх, «Красноармеец кĕнеки» çине кĕртнĕ. Çавăнтан вара вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕн заповечĕ пулса тăнă.

Суворов салтаксене паракан воспитани системи 1-мĕш Павел пурнăçа кĕртсе пыракан Пруççи системине, патакпа хĕнесе вĕрентес системăна, пĕтĕмĕшпех хирĕç пынă. Ватăлса çитнĕ полководец Пруççи йĕркисене уççăнах хирĕç тăнă, вăл йĕркесене хăйĕн чăсĕсене çывăха та ярасшăн пулман. Суворова император Новгород губернинчи Кончанское имение ссылкăна ярса, полици аллине панă.

Çарсен чапа тухнă полководецĕ вăхăтлăха кусрăн çухалнă пек туйăннă. Анчах хăйĕн юратнă ĕçĕнчен инçере тăнă чухне те вăл, пĕччен скер, Бонапарт мĕнле çĕмĕрсе çÿренине тимлĕн сăнанă. Чăнах та, Наполеон пуçласа янă вăрçăсем Россия правительствине Суворов çинчен аса илтернĕ.

1799 çулта ăна вырăссен 60 пин çынлă çарĕпе Италие янă. Кунта полководецăн стратегиллĕ генийĕ тата вырăс салтакĕн тĕлĕнмелле пултарулăхĕ пĕтĕмĕшпех палăрнă. Темиçе уйăх хушши пынă юнлă çапăçусенче французсен виçĕ вăйлă çарне çапса салатса, Суворов Çурçĕр Италие Франци войскисенчен тасатнă. Çак çапăçура унăн начар союзникĕ—австриецсем—ăна пĕччен тăратса хăварнине пула, унăн Сен-Готардски ту каççи урлă Швейцарие куçмалла пулнă. Сивĕ тăман витĕр, пăр тĕмескисем урлă, сăртсем çинчи тĕтре витĕр утса тухса, вырăс мухтавĕн летописне тата тепĕр çутă страница çырса хăварнă. Унăн çарĕ сăрт тăррисенче французсен çарĕсемпе çапăçса тунă чаплă ĕçсем вăрçăсен пĕтĕм историйĕнче стратеги искусствин чи тĕлĕнмелле ĕçĕ шутланса тăраççĕ.

Суворов Петербурга пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăракан мухтавлă çын пулса таврăннă. Анчах Павел император унăн мухтава тивĕçлĕ ĕçĕсене татах манса кайнă. Патша таврашĕнчи çынсем чапа тухнă генералиссимус Павел патшан реакциллĕ политикине хирĕç пынине пĕлсе тăнă.

Полководец вырăс çыннине юратнă тата ăна калама çук пысăк хак панă. Пĕррехинче Суворов пĕр унтер-офицера офицер чинĕ пама ыйтнă. Анчах çав унтер дворянин йăхĕнчен пулман пирки, Суворова çав ĕçе тума отказ панă. Александр Васильевич хуйхăрса çапла каланă: «Этем пултарулăхĕ вăл йывăç хуппи ăшĕнчи бриллиант; унăн çутине çынсене кăтартас пулать. Халăх хушшинчен тупса кăларнă талант ытти çынсенчен пуринчен те малта тăрать. Вăл ăнсăртран мар, аслине пула мар, йăха пула мар çапла пулнă, вăл хăйне пула çеç çапла пулса тăнă. О, тăван Россия! Унтерсенчен мĕн чухлĕ герой çитĕнтертĕн эсĕ...»

Юлашки çулхи событисемпе хуйхă-суйхăсем старикĕн вăй-халне хавшатнă. Петербурга таврăнсан, вăл икĕ эрне те пурăнайман, 1800 çулхи майăн 6-мĕшĕнче вилнĕ.

Генилле полководец вилнĕ пирки пĕтĕм Россия хуйхăрнă. Суворовăн ячĕ халăх асĕнче юлнă. Вăл туса хатĕрленĕ вăрçă аслăлăхĕ самодержавипе çав вăхăтри çынсенчен вăраха юлнă, мĕншĕн тесен вăл хăй вăхăтĕнчи ĕмĕртен нумай мала иртнĕ.

Суворов хуласемпе крепоçсем илессинчен ытла тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкмалли стратеги хаклăнă. Вăл, маневрсене ерипен туса ирттерессине хирĕç пырса, яланах хăвăрт пырса çапма хушнă, хăвăрт та хытă пырса çапни питĕ паха пулса тăнине тĕплĕн ăнлантарса панă.

Суворов çапла вĕрентнĕ: тăшмантан пытанмалла мар, ун çине чăрсăррăн атакăна кĕрсе каймалла. Тăшман пырса çапасса кĕтмесĕр, пуçарулăха алла илсе, ăна хăйне пырса çапмалла. Хăвăрт пырса çитсе, кĕтмен çĕртен пырса çапса, поражени тÿстермелле. Маневр тăвассине тĕплĕн шухăшласа хурса, ăна çиçĕм пек хăвăрт пурнăçа кĕртмелле. Тăван çĕршыва сыхлассишĕн вăя та, сывлăха та, пурнăça та хĕрхенмелле мар.

Çак сăмахсене такам та ăнланать, анчах унта питĕ пысăк аслăлăх пуррине куратăн. Суворов войскисем çĕнĕлле, хăй шухăшласа тупнă пек, хăвăрт пырса тапăнни тăшмана яланах сехĕрлентернĕ. Тăшмантан чеерех пулма пĕлни, вăл кĕтменнине тума пултарни Суворов войскисене тăшмантан вăйлăрах тунă, тăшмана сахал вăйпах пĕтерсе тăкма май панă.

Унтанпа пĕр ĕмĕр çурă вăхăт иртрĕ. Фашистла вăрă-хурахсене хирĕç Сталин юлташ ертсе пынипе кĕрешекен Хĕрлĕ Çар, совет техникин хăватлă хĕçпăшалĕпе хĕçпăшалланнăскер, вырăссен мухтава тивĕçлĕ полководецĕсем халаласа хăварнă пек çапăçу шухăш-кăмăлĕпе çунатланса çапăçать. Çак Çар ултавлăн килсе тапăннă тăшмана çĕмĕрсе тăкас историллĕ задачăна мухтавлăн пурнăçлать. Çав Çар тăван çĕршыва захватчиксенчен ĕмĕрлĕхех тасатĕ.

Проф. А. ЯКОВЛЕВ,
Сталинла премии лауреачĕ.

Ялсовет депутачĕсем

ИШЛЕЙ. Ярапайкасси ялсовечĕ вăрçă вăхăчĕ кăларса тăратнă ĕçсене тивĕçлипе пурнăçласа пырать. Ялсовечĕ пысăк ушкăнлă актива пĕрлештерсе тăрать. Ялсовечĕ кашни уйăхрах хăйĕн ĕç планне актив хушшинче сÿтсе-явса çирĕплетет. Çав план тăрăх сессисене, ялсовет исполкомĕн заседанийĕсене вăхăтра ирттереççĕ, кирлĕ ыйтусене вăхăтра сÿтсе-яваççĕ.

Депутатсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Ялсовет депутачĕ Клавдия Ивановна Тетерина кашни ĕçех хутшăнать. Вăл ялсовечĕн шкул енĕпе ĕçлеме тунă комиссине ертсе пырать. Комисси членĕсемпе час-часах ларусем ирттерет, вĕсенче кирлĕ ыйтусене сÿтсе-яваççĕ.

Ялсоветĕнче тулли мар вăтам шкул пур. Вăл вĕренÿ çулне пур енчен те çителĕклĕ хатĕрленсе çитнĕ. Хĕл каçмалăх вутă хатĕрленĕ. Вĕренме çул çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарнă.

Фронтовиксен çемьисене тăтăшах пулăшу парса тăраççĕ, вĕсен ачисем шкула пурте йĕркеллĕ çÿреççĕ.

Вăрçă ялсовечĕсене ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçлеме хушрĕ. Халĕ фронта апат-çимĕç çителĕклĕ таран парса тăмалла. Çакна ялсоветĕнчи колхозсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Ялхуçалăхĕнче ĕç вăйĕ чылай чакрĕ пулсан та, колхозниксем хастарлăн ĕçленипе ялхуçалăх ĕçĕ вăрçăчченхинчен хăвăртрах пулса пырать. Ялсовет депутачĕсем колхозниксемпе колхозницăсен ĕçкунĕсен обязательнăй минимумне тултармалли çинчен тата ĕçшĕн хушса тÿлемелли çинчен йышăннă законсене колхозниксене ăнлантарса панă.

Депутат Максим Степанов ĕçлекен «Красная Чувашия» колхозра ĕçсем чылай лайăхланчĕç. Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт вĕçлерĕ, государство умĕнчи парăмсене срокчен татрĕ, выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитрĕ.

Доронин ячĕпе тăракан колхоз пур ĕçре те малта пырать. Ялсовет депутачĕ Дария Краснова пур ĕçре те хăй малти ретре пырса, колхозри обществăллă ĕçе малалла ярассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет.

В. ГУСЬКОВ.

ТАСС опроверженийĕ

Юлашки кунсенче фашистсен Римри, Берлинри тата Гельсинкири радиостанцийĕсем суя та ирсĕр пĕлтерÿсем сараççĕ. Çав пĕлтерÿсем тăрăх, тĕнчере çук пĕр организаци «Англин Итали ĕçĕсене пăхма тунă контроль комиссийĕ» итальянецсен 4—15 çулхи ачисене Российăна яма Мускав сĕннипе килĕшнĕ пулать. Гитлерла радио, Рим шухăшласа кăларнă суя сăмаха ярса тытнăскер, декабрĕн 20-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: «Итальянецсен 4—15 çулхи арçын ачисене Совет Союзне яма хатĕрлемешкĕн» Кăнтăр Италие совет комиссийĕ пырса çитнĕ пулать. Темиçе кун иртсен çав гитлерла радио çапла каланă: итальянецсен ачисене Совет Союзне турттарса каякан 7-мĕш пароход ĕнтĕ Сицилири пĕр гаваньрен тухса кайнă пулать.

ТАСС çакăн пек пĕлтерме полномочи илнĕ: фашистсен Римри, Берлинри тата Гельсинкири радиостанцийĕсем сарнă çав пĕлтерÿсем, малтан пуçласа вĕçне çитиччченех, суя тата элеклĕ пĕлтерÿсем пулса тăраççĕ, çапла вара вĕсем нимĕçсен, итальянецсен, финсен ирсĕрĕсем усал шухăшпа туртса кăларнă суя сăмахсем пулса тăраççĕ.

Ют çĕршывсенче

Америкăн государствăпа общество деятелĕсем Совет Союзне çĕнĕ çул ячĕпе янă саламсем

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство деятелĕсем чылайĕшĕ ТАСС отделенийĕ урлă Совет Союзне çĕнĕ çул кунĕ ячĕпе саламсем янă.

США-н вице-президенчĕ Уоллэс хăйĕн саламĕнче çапла калать:

«Ахаль çынсен ырлăхĕшĕн çĕнĕрен тĕрĕслĕх туса хума пултаракан халăх вăйĕ пуррине вырăс халăхĕ çĕр çул хушши ытла ĕненсе тăнă».

Уоллэс малалла çапла калать: «1944 çул союзниксем пĕрлешсе кĕрешнине курĕ. Çапла кĕрешнипе тăшмана çĕнтерĕпĕр, çапла кĕрешни мĕнпур çĕршывсенчи ахаль çынсем валли çĕнĕ майсем тупса парĕ».

Çар хатĕрĕсем тăвас ĕçсен управленийĕн председателĕ Нельсон çапла çырать:

«Эпĕ çĕнĕ çул кунĕ умĕн совет халăхне тата Совет Союзĕн руководителĕсене саламлатăп. Эпĕ çакна хытă шанса тăратăп: пирĕн икĕ аслă халăх хушшинчи туслăх, халь ÿснĕçемĕн ÿссе пыраканскер, эпир çĕнтернĕ хыççăн мирлĕ çулсенче йăлтах ÿссе çитсе чечекленсе ларĕ».

* * *

Шалти ĕçсен министрĕ Икес «Совет Союзĕнчи никам çĕнтерейми боецсене—арçынсемпе хĕрарăмсене—тата çĕнтерÿллĕ фронт линийĕ хыçĕнче çирĕп тăракан граждансене çĕнĕ çул кунĕ ячĕпе пĕтĕм чĕререн салам» ярать. Вăл çапла çырать: «Эпĕ çĕнĕ çул кунĕ умĕн сире, хамăн çĕршыва тата пĕтĕм тĕнчери мĕнпур демократиллĕ халăхсене çапла сунатăп: пĕлтĕр çав тери лайăх палăрнă хастарлăх, хăюллăх, паттăрлăх тата çынсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçни çĕнĕ çулта тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерччĕр».

Представительсен палатин ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕн председателĕ Блум хăйĕн саламĕнче çапла калать: совет халăхĕпе унăн çарĕ хăйсен паттăрлăхне пула çапăçусенче çĕнтерни—«1944 çулта пĕтĕмпех çĕнтерессине, Совет Союзĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери халăхсене мирпе хăрушсăрлăх кÿрессине шанма май парать».

Совет Союзĕнче Америкăн посолĕ пулса ĕçленĕ Дэвис Совет Союзне çапла каласа саламлать: «Пĕтĕм тĕнче хисеплекен Маршал Сталин аслăн ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăх тата Хĕрлĕ Çар фашистла агресси хăрушлăхне малтанах курса тăнă çеç мар, вĕсем, аслăн та хастарлăн ĕçлесе, çав агрессине тĕппипех пĕтерсе лартма май паракан ĕçсем тунă».

ЮНРРА-н генеральнăй директорĕ Лимэн «Совет Союзĕн хастарлă халăхĕпе унăн хĕçпăшаллă вăйĕсене çĕнĕ çул кунĕ ячĕпе» саламлать тата вĕсене чи лайăх пурнăç сунать.

Полярти вырăнсене тĕпчекен Стифансон хăйĕн саламĕнче çапла çырать: «Совет Союзĕн правительствипе халăхне çĕнĕ çул кунĕ ячĕпе саламлассине эпĕ калама çук пысăк телей тесе шутлатăп. Хĕрлĕ Çар этемлĕхе парăнтарса чуралантарасран хăтарчĕ. Пирĕн çĕршыв çак кĕрешÿпе çĕнтерÿре (эпир çĕнтеретпĕрех тесе шутлама пулать ĕнтĕ) сирĕнпе пĕрле килĕштерсе ĕçленĕшĕн савăнать. Совет Союзĕ ирĕклĕхе юратакан пĕтĕм этемлĕхе çĕнĕ çулта телейлĕ пурăнас шанчăк пачĕ».

«Çак вăрçăра çĕнтермешкĕн тата яланлăха мир туса хумашкăн манăн çĕршывпа Англия Совет Союзĕн халăхĕсемпе союз туни çинчен пĕлтернĕ хыпарсем эпĕ хамăн пурнăçра илтнĕ чи телейлĕ хыпарсем пулса тăраççĕ», тесе çырать писатель Эптон Синклер.

РУЗВЕЛЬТАН ÇĔНĔ ÇУЛ ЯЧĔПЕ ЯНА ПОСЛАНИЙĔ

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, президент Рузвельт Америка халăхĕ патне послани янă. Çав посланире çапла каланă:

«Эпир наступлени пуçласа ятăмăр. Пирĕн тăшмансене çавăрса илнĕ ункă пĕр хĕрхенмесĕр хĕсĕнсе пырать. Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем çĕнĕрен тата вăйлăрах наступлени тума хатĕрленеççĕ. Çак наступленире агрессиллĕ державăсене аркатса тăкĕç. Пĕрлешÿллĕ нацисем тата вăрçăри çапăçусем хыççăн пуçланмалла кĕрешĕве те манмаççĕ. Çак кĕрешÿ вăл—чир-чĕрсене, выçăллă-тутăллă пурăнассине, ĕçсĕрлĕхе тата экономикăрипе социальнăй ытти асапсене хирĕç кĕрешесси пулать. Килес вăхăтра агрессие хирĕç кĕрешес ĕçре çитĕнÿ тăвас тесен тата мĕнпур халăхсемпе уйрăм çынсен пурнăçне лайăхлатас тесен, пирĕн, вăрçă пынă вăхăтра пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленĕ пекех, малашне те килĕштерсе ĕçлемелле. Умра тăракан çав тери пысăк задачăсене пăхса тухса, пирĕн çав туслăха çапăçу хирĕнче тататклă çĕнтерÿ тăвассишĕн çеç мар, килес ăрусем валли мирпе хăрушсăрлăха сыхласа хăварас тесе мире юратакан нацисен организацийĕсене туса хумашкăн та хамăр çине обязательство илмелле».

БЕНЕШ РЕЙТЕР АГЕНТСТВИН ТЕГЕРАНРИ КОРРЕСПОНДЕНТНЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Тегеранри специальнăй корреспонденчĕпе Джон Уоллиспа калаçнă чухне Чехословаки республикин президенчĕ Бенеш. Тегеранран тухса каяс умĕн çапла каланă: «1944 çул — çĕнтерÿ çулĕ. Вырăссем Хĕвелтухăç фронтĕнче çĕнтерÿллĕн малалла куçса пыраççĕ ĕнтĕ. Анчах вăрçăн чи хăрушă тапхăрĕ малта-ха», тенĕ.

Бенеш хăй Мускава кайса килнĕшĕн питĕ кăмăллă пулни çинчен каласа панă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ÇУЛТАЛĂК ХУШШИНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: официальнăй даннăйсем тăрăх, Германи авиацийĕ 1943 çулта Англи çине пăрахнă кашни тонна бомба вырăнне Англи авиацийĕ Германи çине 64 тонна бомба пăрахнă. Нимĕçсем Англи çинче çухатнă кашни самолечĕ пуçне 8 тонна бомба пăрахнă. Акăлчансем Германи çинче тата Европăри оккупациленĕ çĕршывсем çинче персе ÿкернĕ кашни самолечĕ пуçне 47 тонна бомба пăрахнă.

Нимĕçсем Англи çине 1943 çулта 2.400 тонна бомба пăрахнă. Англи авиацийĕн Германипе вăл оккупациленĕ çĕршывсем çинче 3.294 самолет тата Англи çинче 4 самолет пĕтнĕ. Германия Хĕвеланăç Европа çинче 1.050 машина çухатнă, Англи çинче—315. Вăтаçĕр тинĕсри вăрçăра тĕнĕл держависем 4.254 самолет çухатнă пулсан, Англи авиацийĕ 1.650 самолет çухатнă.

БЕРЛИНА ИШСЕ ПĔТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ Берлина декабрĕн 30-мĕшĕнче пырса тапăннине курнă çынсем каласа панă тăрăх, çапла пĕлтерет: Берлинăн хĕвелтухăç тата хĕвеланăç районĕсене çав тери пысăк сиен тунă. Хулан чи пысăк Унтер-Ден-Лиден ятлă урамĕнче ишĕлмен çурт пĕрре те юлман. Хула варринче икĕ çурт çеç тăрса юлнă.

ФИНЛЯНДИН ГОСУДАРСТВО ПАРĂМĔ ÿСНИ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндин «Суомен сосиалидемокраатти» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Финляндин финанс министрĕн заместителĕ Рейникка çапла каланă: «Финляндин государство парăмĕ, 1943 çулта 12 миллиард маркăлăх ытла ÿссе, çĕнĕ çул пуçланнă тĕле 50 миллиарда çитрĕ», тенĕ. Рейникка государствăн парăмĕ виçерен ытла ÿссе кайнине йышăннă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00003 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.